Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТӐВАН ЕН

19 (9161) № ❋ 2006 ҫулхи февралӗн (нарӑс уйӑхӗн) 22-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

# ҪӖРШЫВ ХӰТӖЛЕВҪИСЕН КУНӖ ЯЧӖПЕ!

***Раҫҫей Федерацийӗн ҫарӗпе флотӗнче службӑра тӑракан хисеплӗ воинсем, запасри салтаксемпе сержантсем, офицерсем, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑпа ҫар ветеранӗсем!***

***Сире пурне те Ҫӗршыва хӳтӗлекенсен кунӗ ячӗпе саламлатӑп!***

*Ҫак уяв ӑрусене пӗрлештерекен, ҫар мухтавӗн уявӗ! Ҫӗршыва юратса унӑн пуласлӑхӗшӗн пурнӑҫа хӗрхенмесӗр хӑйӗн тивӗҫне пурнӑҫлани Раҫҫей ҫар ҫыннишӗн яланах малти вырӑнта тӑнӑ. Пирӗн ҫар ҫыннисен мухтавӗ ҫӗршер ҫул каяллах иксӗлми паттӑрлӑхпа палӑрнӑ. Малашне те ҫаплах пуласса шанса тӑратӑп.*

*Паян та эпир хамӑрӑн чӑн-чӑн арҫынсемпе, ҫӗршыва, тӑван киле хӳтӗлекенсемпе, унӑн ырӑ йӑли-йӗркине упраса пырассишӗн вӑй-халне шеллемесӗр тӑрӑшакансемпе мухтанма пултаратпӑр. Вӗсенче пулать те ӗнтӗ вӑл - пирӗн ҫӗршывӑн пуласлӑхӗ.*

*Сире пурне те ҫак уяв ячӗпе ҫирӗп сывлӑх та ӑнӑҫу, телейпе ыррине ҫеҫ сунатӑп.*

**Н.ФЕДОРОВ,** Чӑваш Республикин Президенчӗ.

***Хисеплӗ ентешӗмӗрсем, Тӑван ҫӗршывӑн хаклӑ хӳтӗлевҫисем!***

*Сире пурне те Ҫӗршыв хӳтӗлевҫисен кунӗпе чун-чӗререн саламлатӑп. Мухтава тивӗҫ ентешпаттӑрсем яланах пирӗн чӗрере упранӗҫ, ҫамрӑк ӑру аслӑ ӑрӑвӑн шанӑҫне тӳрре кӑларасса, пуян ӑс-тӑнлӑ, ҫирӗп сывлӑхлӑ ҫитӗнсе Тӑван Ҫӗршывӑн шанчӑклӑ хӳтӗлевҫисем пуласса ҫирӗп шанса тӑратӑп. Хальхи вӑхӑтра ҫар тивӗҫне ҫӗршывӑн тӗрлӗ кӗтесӗнче пурнӑҫлакан ентешӗмӗрсене ӑна тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫлама чӗнсе калатӑп.*

*Уяв ячӗпе вӗсен ашшӗ-амӑшӗсене уйрӑммӑн саламлатӑп. Ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми шанчӑк сунатӑп. Пурин те хавас кӑмӑл, тӑнӑҫ пурнӑҫ пултӑр.*

**А.КНЯЗЕВ,** Шупашкар районӗн пуҫлӑхӗ.

❋ Асӑрханӑр!

## КАЙӐК-КӖШӖК ГРИПӖ ТӖЛӖРМЕСТ

**Кӗркунне хытах шавласа илнӗ кайӑк-кӗшӗк грипӗ пирки пӗр вӑхӑтра калаҫу лӑпланнӑ пекчӗ. Тавах, пирӗн тӑрӑхшӑн ун чух вӑл ӑнӑҫлӑ иртсе кайрӗ. Халӗ ҫуркунне ҫитет. Хӗл каҫма кӑнтӑр енне кайнӑ кайӑксем каялла хӑйсен тӑван енне таврӑнма пуҫлӗҫ. Ҫакӑ самай хӑрушлӑх кӑларса тӑратать те, мӗншӗн тесен шӑпах чир вӗсен урлӑ сарӑлни вӑрттӑнлӑх мар. Пирӗн районшӑн ку ыйту уйрӑмах актуаллӑ. Районти виҫӗ кайӑк-кӗшӗк фабрики. Вӗсенче пӗр миллион та 482 пин пуҫ кайӑк-кӗшӗк. Чир пӗр кайӑка лексен малалла сарӑласси часах. Унтан пӗтӗм ушкӑна пӗтерме тивӗ. Апла пулсан, шухӑшламалӑх пур.**



Районӑн патшалӑх тӗп ветинспекторӗ В.П.Афанасьев та асӑрханма кирлине хытах палӑртать. Кун валли районта ятарлӑ мероприятисен планне хатӗрленӗ. Мӗн кӗрет-ха унта? Чи малтанах кайӑк-кӗшӗк фабрикисене хупӑ режимпа ӗҫлеттересси. Кунтах - территорие кӗрсе тухнине ҫирӗп тӗрӗслесе тӑрасси те, мӗнпур ветсанобъекта йӗркеллӗ ӗҫлеттересси те, санперсоналпа транспорт т.ыт.те валли санпропускник кирли... Грипп сарӑласран туса ирттеремелли ӗҫ планӗ пысӑк. Кайӑк-кӗшӗк фабрикисенче тимлекенсене уйрӑм хушма хуҫалӑхра чӑх-чӗп, хуркӑвакал тата сысна тытма чарасси таранах палӑртнӑ. Россельхознадзор управленийӗ те фабрикӑсене куҫран вӗҫертмест, тӗрӗслесех тӑрать.

Кашни предприятире тӗрлӗрен лару-тӑру тесен те йӑнӑшмӑпӑр. «Чебоксарская» кайӑк-кӗшӗк фабрикинче, тӗслӗхрен, хурсем ирӗклӗн уҫӑлса ҫӳреҫҫӗ. Каплах пулсан чир вӗсене лекмесси пирки никам та хӑюллӑн татса калаймӗ. Предприятире кун ҫинчен пӗлеҫҫӗ. Сӑмахран, кӗркунне фабрикӑра хӑйсен территорине вӗҫен кайӑксем анса ларасран пӑшалпа хӑратса тӑнӑ.

Мӗнпур требование пурнӑҫласан шикленмелли ҫуккине палӑртать «Чӑваш бройлерӗ» обществӑн директорӗ В.И. Николаев. Ҫавӑнпах вӑл «Чиртен асӑрханса мӗн тунӑ?» ыйтӑва «Нимӗн те» тесе хуравлать. Ҫакӑн пек каланине кура явапсӑр ҫын теме васкар мар-ха Вадим Ивановича. «Мӗн кирлине ултӑ ҫул каяллах пурнӑҫланӑ, - малалла тӑсать вӑл. - Ветеринари ҫинчен калакан саккун пур. Унта йӑлтах уҫӑмлӑ. Хупӑ режимпа ӗҫлемелли те паллӑ». Фабрика хальтерех кӑна тунӑ пӗртен-пӗр япала вӑл - территорие кӗрентухан машинӑна дизраскторпа сирпӗтмелли оборудовани вырнаҫтарни. 35 пин тенкӗ тӑраканскере ятарласа туяннӑ. «Хамӑн машинӑна та сапса кӗртет, тухнӑ чух та сирпӗтет, - тет Вадим Иванович. - Тепӗр вунӑ минутран кӗрес тесен каллех сапать». Чи кирли - дезинфекци, тет фабрикӑн директорӗ. Тата, паллах, хупӑ режим.

Кайӑк-кӗшӗк грипӗ пирӗн тӑрӑха килсе кӗрес пулсан вӑл килти, тепӗр майлӑ каласан уйрӑм хуҫалӑхсенчи, чӑх-чӗппе хур-кӑвакала чи малтанах пырса ҫапать. Ҫавӑнпа вӗсенчи кайӑк-кӗшӗке кӑҫал пуҫласа грипран вакцинацилемелле. Вакцинӑна Мускава заказ панӑ, кӑнтӑр енчи кайӑксем вӗҫсе килме пуҫличчен ӑна туса ӗлкӗресшӗн. Ку мероприяти, ахӑртнех, тӳлевлӗ пулӗ.

**В.ЭВЕРККИ.**

❋ Визит

## ТӖП ИНСПЕКТОР РАЙОН ҪЫННИСЕНЕ ЙЫШӐННӐ

Чӑваш Республикинчи федераллӑ тӗп инспектор А.Д.Муратов иртнӗ эрне кун ял хуҫалӑх предприятийӗсен ертӳҫисемпе тӗп зооветспециалистсен районти канашлӑвне хутшӑнса АПКна аталантарасси ҫинчен калакан приоритетлӑ наци проекчӗ ҫинчен каласа пачӗ. Конкурентлӑ продукци туса илсе республикӑра хамӑр тавара сутма кирлине палӑртрӗ вӑл. Ӗҫлӗ визит вӑхӑтӗнче А.Д.Муратов «Чӑваш бройлерӗ» кайӑк-кӗшӗк фабрикин ӗҫӗхӗлӗпе паллашрӗ, коллективпа курнӑҫрӗ. Вӗсем ҫинчен уйрӑммӑн каласа парӑпӑр.

Визита федераллӑ инспектор халӑха йышӑннипе вӗҫленӗ, ҫынсен нумай ыйтӑвне уҫӑмлатнӑ.

**Т.ИВЕРИНА.**

## АГРАРИ ПАРТИЙӖН ПУХӐВӖ

Эрне кун Раҫҫейри аграри партийӗн районти уйрӑмӗн пухӑвӗ иртрӗ. Унта уйрӑмӑн пуҫлӑхӗ В.Н.Мустаев ӗҫ-хӗле пӗтӗмлетрӗ, ревкомисси председателӗ А.И.Смирнов отчет туса пачӗ. Партин районти уйрӑмӗн ӗҫ-хӗлне делегатсем «тивӗҫтерӳллӗ» тесе хакларӗҫ.

Пухӑвӑн тӗп ыйтӑвӗ - суйлав. Унта уйрӑм председательне, канаш членӗсене суйлама тиврӗ. Ертӳҫӗ тивӗҫне В.Н.Мустаевах туса пыма шанчӗҫ. Канашра вара хӑш-пӗр улшӑну пулчӗ, ҫӗнӗ йыш 9 ҫынтан тӑрать. Партин республикӑри конференцине кайма районтан сакӑр ҫынна суйларӗҫ.

Мускавра иртекен Пӗтӗм Раҫҫейри пленума парти членне, «Чӑваш бройлерӗ» обществӑн директорне, В.И.Николаева хутшӑнтарма тата ӑна Раҫҫейри аграри партийӗн Тӗп Комитетне суйлама сӗнсе делегатсем ҫыру хатӗрлерӗҫ.

**В.ТИТОВА.**

## ЧӐВАШ ПРОДУКЦИЙӖ ӐҪТА КАЯТЬ?

Республикӑри предприятисем ют ҫӗршывсемпе тачӑ ҫыхӑну тытса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫакна чикӗ леш енне ӑсанакан продукци калӑпӑшӗ ӳссе пыни те ҫирӗплетсе парать. Иртнӗ ҫул 133,2 миллион долларлӑх сутнӑ. Ку вӑл малтанхи ҫулхинчен 22,2 процент нумайтарах. Ҫакӑн ҫинчен ЧР Промышленноҫпа энергетика министерстви пӗлтерет.

Чикӗ леш енне каякан продукцин ҫурри машиностроени комплексне пырса тивет. Хими промышленноҫӗ те аван тӳпе хывать: 28 процент таран. Чикӗ леш енне ӑсанакан продукцирен 22 проценчӗ Казахстанра вырӑн тупать, 16,7 проценчӗ - Украинӑра.

Экспорта ӑсатакансенчен Шупашкарти агрегат тата электроаппаратура, Вӑрнарти хутӑш препаратсен завочӗсене, «Химпром», «Конкорд», «Промтрактор», «Чувашторгтехника» предприятисене палӑртмалла.

**В.АВЕРКИЕВА.**

## ХАЛЬХИНЧЕ - ВИҪӖ КУН

**2006 ҫулта кану кунӗсене куҫарасси ҫинчен РФ Правительстви пӗлтӗрхи декабрӗн 28-мӗшӗнче тунӑ йышӑнупа килӗшӳллӗн ҫак эрнере пирӗн ҫӗршывра виҫӗ кун кантараҫҫӗ.**

**Ҫӗршыв хӳтӗлевҫисен кунне календарьте «хӗрлӗ кун» туса хунӑ. Вырсарни кун вырӑнне эрне кун канӑпӑр. Шӑмат кун - яланхи кану кунӗ. Февралӗн 26-мӗшӗнче ӗҫе тухмалла.**

❋ Райпо

## ПУРНӐҪ ТАППИНЧЕН ЮЛМАСӐР

**Чӑвашпотребсоюз системинче ӗҫлекен суту-илӳ ӗҫченӗсем уполномоченнӑйсемпе пӗрле иртнӗ ҫулхи ӗҫсене пӗтӗмлетсе кӑҫал мӗн тумаллисене палӑртрӗҫ. Ишлей райповӗн пухӑвӗ пирки ҫырса кӑларнӑччӗ. Черетре - Кӳкеҫ райповӗн ӗҫӗ-хӗлӗ.**

Райпон пурӗ 45 магазин, общепит предприятийӗсем саккӑр. Икӗ кондитер цехӗ, пекарня, пылак тата минераллӑ шывсем тултаракан, ҫӗвӗ цехӗсем, аптекӑсемпе парикмахерски, тупӑш кӳрекен ытти мастерскойсем пур.

Иртнӗ ҫул пӗтӗмӗшле тавар ҫаврӑнӑшӗ 65853 пин тенкӗпе танлашнӑ. Тавар сутасси те малтанхи ҫулпа танлаштарсан ӳснӗ, 2591 пин тенкӗ ытларах сутнӑ. Пӗр ҫын пуҫне 3014 тенкӗлӗх тавар тивнӗ. Пӗтӗмӗшле илсен пур магазинсем те ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗ. Ҫав вӑхӑтрах Ҫатракассинчи магазин коллективӗ С.Сорокина заведующи ертсе пынипе уйрӑмах лайӑх тӑрӑшнине палӑртмалла. Иртнӗ ҫул вӗсем халӑха 4 миллион та 616 пин тенкӗлӗх тавар сутнӑ. Ҫатра-Хочехматри (заведующийӗ Э.Гаврилова), Алькешри (Р.Федорова), Мӑналти (З.Михайлова), Шорккари (Д. Егорова), Ҫӗньялти (Т.Николаева), Кӳкеҫри гастрономри (К.Путилова), апат-ҫимӗҫ продукцийӗсем сутакан пӗрремӗш магазинсенче (З.Николаева) тата ыттисене те лайӑх ӗҫленӗшӗн райпо правлени Совечӗ тав тӑвать.

Райпон 40 магазинӗнче ларса чей ӗҫме пулать, нумай ҫӗрте пӗчӗк библиотека, хаҫатжурнал пур. Халӑхран апат-ҫимӗҫпе чӗр тавар та - 229 центнер аш-какай, 191 центнер сӗт, 154 пин штук ҫӑмарта т.ыт.те - пуҫтарнӑ.

2005 ҫулта райпо аталанӑвне 1539 пин тенкӗ хывнӑ. Вӑл шутран ҫӗнӗ оборудовани туянма - 357 пин, инвентарь валли - 611 пин. Магазинсене юсаса ҫӗнетес ӗҫ те малалла пырать. Райпо магазинӗсем халӗ уйрӑм ҫын тытса тӑраканнисенчен пӗрре те юлмаҫҫӗ. Пухӑннисем кӑҫал тата та лайӑхрах ӗҫлес шухӑшлӑ.

Уполномоченнӑйсен пухӑвне Чӑвашпотребсоюз Совечӗн председателӗ В.М.Павлов тата Шупашкарти кооперативлӑ институтпа техникум, райадминистраци представителӗсем тата ытти хӑнасем хутшӑннӑ.

**П.ПАВЛОВ.**

❋ Синоптиксем пӗлтернӗ тӑрӑх

**Юн кун, февралӗн 22-мӗшӗ**
пӗлӗтлӗ, кӑштах юр ҫӑвать,
кӑнтӑрла $-4^{0}...-2^{0}$
ҫӗрле $-11^{0}...-9^{0}$

**Кӗҫнерни кун, февралӗн 23-мӗшӗ**
юр ҫӑвать,
кӑнтӑрла $-2^{0}...-0^{0}$
ҫӗрле $-4^{0}...-2^{0}$

**Эрне кун, февралӗн 24-мӗшӗ**
пӗлӗтлӗ, кӑштах юр ҫӑвать,
кӑнтӑрла $-3^{0}...-1^{0}$
ҫӗрле $-4^{0}...-2^{0}$

**Шӑмат кун февралӗн 25-мӗшӗ**
пӗлӗтлӗ, кӑштах юр ҫӑвать,
кӑнтӑрла $-9^{0}...-7^{0}$
ҫӗрле $-12^{0}...-10^{0}$

# ТИРПЕЙСĔРЛĔХЕ ПЫТАРАЙМĂН

**Хĕл вĕçнелле çурхи хăпартланупа пĕрлех юр айĕнчен темĕн тĕрлĕ çÿп-çап тухни кăмăла пăлхатать. Хăш-пĕр çĕрте вара çÿçенсе каймалла тирпейсĕрлĕх хуçаланать. Этем пурăнмасть тейĕн. Анчах çын мар пулсан, кам çапла хăтланма пултарĕ-ха? Выльăх та хăйĕн вырăнне вараламасть теççĕ. Хĕлле юр çуни те пытарса ĕлкĕреймест çак ирсĕрлĕхе. Çÿп-çап контейнерĕсене вăхăтра пушатса тăман пирки тулса тăкăнаççĕ, çилпе таçта çити саланаççĕ, йытă кĕтĕвĕ те кунĕн-çĕрĕн тустарать.**

Çулталăкне пĕр кун субботник ирттерни, паллах, тирпейлĕхе çăлса хăвараймасть. Кун пирки чан çапма тахçанах вăхăт ĕнтĕ. Тавралăха тасалăхра упрас культурăна мĕн ачаран ăша хывмалла. Канихвет хутне айккине ывăтса хăварнинченех пуçланать вараласси. Юраман вырăна машини-машинипе çÿп-çап тăкса хăваракан «çут çанталăк тăшманĕсене», ахăртнех, пĕчĕк чухне çавăншăн «хăлха пăрман» ĕнтĕ. Уйрăмах аслă çул хĕрринчи ял территорийĕсем шар кураççĕ. Тĕттĕмленсен палламан кузовлă автомашина свалкăна леçмелли «ыр япалана» тăкать те хăварать. Пирĕн ял, Чăрăшкасси, час-часах çак ирсĕрлĕхе тÿснине ас тăватăп. Ун пек ялсем районта татах пур.

2005 çулта район прокуратури ЧР Роспотребнадзор специалисчĕсемпе пĕрле çут çанталăка сыхлас саккуна пурнăçлас сферăра тĕрĕслевсем ирттернĕ. Йăлари çÿп-çапа, предприяти каяшĕсене Илпеш территорийĕсенчи свалкăсене тăкнă чух саккуна пăснине тупса палăртнă. Экологи тата санитарипе эпидемиологи ыйтăвĕсене тивĕçтерменшĕн айăплисене явап тыттарнă.

Производство каяшĕсем тавралăха вараласçĕ, чыссăрлатаççĕ кăна мар, сывлăша сиенлетсе этем сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Атмосферăна тухакан сиенлĕ япаласен тата производство каяшне вырнаçтармалли лимит проекчĕсен нормативĕсене хатĕрлеменшĕн «Чувашское», РСПМК-1 акционерсен обществисем тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарнă.

Гидротехника сооруженийĕсемпе усă курнă чухне те шыв хуçалăхĕн тата шыв сыхлавĕн правилисене пăснă тĕслĕхсем пур. Район прокуратурин помпрокурорĕ А.И.Никифоров пĕлтернĕ тăрăх, «Слава», «Туруновский» ЯХПКсен, Куйбышев ячĕллĕ, Кадыков ячĕллĕ колхозсен, «Дружба» ПУПăн пуçлăхĕсен тĕлĕшĕпе административлă ĕç пуçарнă. Ĕçмелли шыв законодательстви ыйтнине пăснăшăн Шĕнерпуç,


Фото ÿкерчĕкĕ авторăн.

Толик-Хураски, Шăмăш, Çĕньял, Сарапакасси ял администрацийĕсен пуçлăхĕсене явап тыттарнă.

Выльăх çăвисенче санитарипе-эпидемиологи тĕлĕшĕнчен асăрхаттарусем пулни пирки пĕрре мар çырнăччĕ. Прокуратурăран пĕлтернĕ тăрăх, ку тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăннă. Шемшер, Апаш, Хыркасси, Çырмапуç тăрăхĕсенчи скотомогильниксенче тÿрременех «Ветеринари çинчен» РФ саккунне çителĕклĕ тытса пыманнине палăртнă. Яваплисене штраф хунă.

Çут çанталăка сыхлассипе çыхăннă ыйтусене пурнăçламаншăн пĕлтĕр 14 пуçлăха административлă яваплăх тыттарнă.

**А.ИЗМАН.**

**❂ «Кунтан хăрушă-рах та пулать»,- теççĕ Кÿкеçри Геологи урамĕнче пурăнакансем.**

# ПРОФИЛАКТИКА КАНАШНЕ ЙĔРКЕЛЕНĔ

«ЧР çемье медицинине аталантарас тĕллевпе хушма мерăсем йышăнасси» çинчен ЧР Президенчĕн Указне пурнăçа кĕртессипе районта ведомствăсем хушшинчи профилактика канашне йĕркеленĕ. Вăл ял халăхне сывă пурнăç йĕркине тытса пырассине вĕрентмелли программăпа килĕшÿллĕн пулса пырать. Унăн çĕнĕ йышне çирĕплетнĕ. Иртнĕ эрнере профилактика канашĕн кăçалхи пĕрремĕш ларăвĕ иртрĕ. Кăрлач сиввисем хыççăн гриппа ОРВИ эпидемийĕ пуçланма пултарĕ. Çавăнпа та ку ыйтăва пĕрремĕш вырăна тăратнă. Аптекăсенче, шкулсемпе интернатсенче, ваттисен çурчĕсенче ку чирсемпе кĕрешмелли препаратсем çителĕклĕ, прививка тăвакансем те пулнă.

Çуркунне кăнтăрти çĕршывсенчен кайăксем вĕçсе килнĕ май кайăк-кĕшĕк грипĕ сарăлас хăрушлăх пур. Кайăк-кĕшĕк фабрикисен ку тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнмалла. «Чăваш бройлерĕ», «Чебоксарская» фабрикăсен, район ветеринари тухтăрĕсем лару-тăрупа паллаштарчĕç. Ял тăрăхĕсенче ведомствăсем хушшинче те профилактика канашне йĕркелеме сĕнчĕç. Тутаркассинче, сăмахран, халăх хăй ирĕкĕпе йĕркеленĕ вырăнти халăх сывлăхне, гигиенине сыхлас тĕлĕшпе комисси ĕçлет. Кун пирки А.А.Елимов каласа пачĕ. Ыттисен те вĕсенчен тĕслĕх илесчĕ.

Ларăва кварталта пĕрре ирттерме йышăнчĕç. Этем сывлăхне мала хуни, анлă комисси шайĕнче çĕклени, чăн та, пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**А.ТИМОФЕЕВА.**

**❂ Февралĕн 26-мĕшĕ - Çăварни**

# *ÇĂВАРНИ ЮРРИ*

**Çак юрра 2005 çулхи кăрлач уйăхĕнче 88 çулхи Александра Никифоровна Леонтьеваран çырса илнĕччĕ.**

*Кăçал çăварни сулнкăллă,*
*Сулнка каять - тытсамăр,*
*Пушах каять - ларсамăр,*
*Иртсех каятăр - кĕртсемĕр.*

*Хĕрсем, сире, тав сире,*
*Ытармалла мар сире,*
*Хĕлле ларма пымалла,*
*Çулла качча тухмалла.*

*Çăварни çуни*
*шуç хыçлă,*
*Çутти ÿкет юр çине,*
*Ячĕ юлать ял çине.*

*Хĕрсем, сире, тав сире,*
*Çăри пире, курки сире,*
*Ÿсĕр пире - мухмăр сире.*

Юрăри сăмахсене вулатăн та, кашни йĕркерех чăваш халăхĕн авалхи ырă йăли-йĕрки, таса кăмăлсипечĕ палăрса тăнине чунпа туйса илетĕн. Лаша кÿлсе, шуç çаптарнă хыçлă çунапа çăварни чупма аякран килекенсем куç умĕнчех тейĕн: вĕсем савăнăçлă, çуран утакансене те лартса кайма хатĕр, хăнана кĕрсе тухма та хирĕç мар. Ялти хитре хĕрсене çăварни иртсен хăйсем патне ларма пыма чĕнеççĕ. Хăнасем «ял çине» ырă ят хăварасшăн, хăйсене сăйланăшăн тав тăваççĕ, сăра ĕçсе (эрех ĕçсе мар!) ÿсĕр пултăмăр тесе шÿтлеççĕ.

Сулăнкă мĕнне пĕлмен çамрăксем те пур паян. Вĕсем, паллах, хĕлле çуна çулĕсем якалса ларнине курман. Çавăн пек чух çунасем çул хыттинчен шуса анса айккинелле сулăна-сулăна кайнă, тепĕр чух тайлăк вырăнта ÿпĕннĕ те. Çăварни чупакансем вара лашисене ăмăртмалла хăваланă.

**Т.ВЕРЕНДЕЕВА, Çĕньял-Покровски ялĕ.**

# *ЗАВОД ĔÇЧЕНĔСЕМ САВĂНМА ТА ПĔЛЕÇÇĔ*

«Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕ» тулли мар яваплă обществăра Татьяна тата Çветтуй Валентин кунĕсене чылайччен асра юлмалла та нихçанхинчен уйрăлса тăмалла ирттерчĕç.

Татьянăсене тата вĕренекен çамрăксене профсоюз комитечĕ заводăн Хисеп аллейин ялавĕ патĕнче сăн ÿкерессине йĕркелерĕ, нумайăшне чăваш эстрада çăлтăрĕсен концертне кайма билет пачĕ.

Кун пек мероприятисене ытти çул та йĕркеленĕ, анчах кăçалхин расналăхĕ - вăл вăрăма тăсăлни: заводăн проходнăйĕнче, чи курăнмалли вырăнта, капăрлатнă почта ещĕкне темиçе кун маларах вырнаçтарчĕç. Унта Çветтуй Валентин кунĕпе ĕçтешсене, юлташсене саламлакан открыткăсемпе çырусем кашниех чăмтарма пултарчĕ. Уява пуçараканĕсем тата хавхалантарса тăраканĕсем - предприятире бухгалтерта тимлекен Наталья Егоровапа Екатерина Иванова. Чи кĕтменлĕхĕ уяв кун пулчĕ: почта ещĕкĕнчен çĕршер çырупа салам тухрĕ. Вĕсене цехсемпе участоксем, пайсем тăрăх валеçрĕç. Хăшĕсене икшер-виçшер салам лекрĕ. Уявăн тĕп парнине механика участокĕн сверловщици Алина Желудкина тивĕçрĕ.

Уяв кунĕсенче çынсен питĕнчен хаваслă кулă каймарĕ, уява йĕркелекенсене вĕсем чунтан тав турĕç.

**А.ЕВДОКИМОВ, заводăн музей директорĕ.**

# *КАНУ КАÇĔ*

Мăн Маркари культура çуртĕнче кашни шăмат кун тенĕ пекех мероприятисем ирттересси йăлана кĕчĕ. Акă иртнинче Асхакăл пуянлăхĕн çулталăкне халалласа «Юрату» кунне палăртрăмăр. «Эпĕ юрататăп, апла пулсан пурăнатăп!» программăна хатĕрлекенĕ тата ертсе пыраканĕ культура çурчĕн пуçлăхĕ И.П.Нестерова пулчĕ. Кану каçĕнче тĕрлĕ конкурс иртрĕ.

Çамрăксем çитмĕл çулхи старике е виçĕ çулхи ачана юратни çинчен каласа, «арăмсем» пулас «упăшкисене» тăхăнтартассипе, арçын ачасем хĕрарăмла тăхăнса хăйсен хĕрĕсем патне чупса çитсе чечек парнелесе, т.ыт.те тупăшрĕç. Конкурссем питĕ интереслĕ пулчĕç. Кану каçĕ вăхăтĕнче «почта» ĕçлерĕ: яшсемпе хĕрсем пĕр-пĕрне «валентинкăсем» çырса саламларĕç. Конкурссем хушшинче Ксюшăпа Ирина Нестеровсем илемлĕ юрăсем парнелерĕç.

Кану каçĕ каларăшсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе, историре пулса иртнĕ фактсемпе пуян пулчĕ. Çамрăксем хăйсем валли çĕнни нумай пĕлчĕç, килĕсене хаваслă сăн-питпе саланчĕç.

**Ксения НЕСТЕРОВА, 11-мĕш класс.**

**❂ Паспорт**

# *ВĂЛ - ТĔП ДОКУМЕНТ*

**Паян паспортсăр, аяккалла пĕр утăм та тăваймастăн. Вăл пирĕншĕн - тĕп документ. Ăна парасси, улăштарасси тата унпа çыхăннă ытти операцисем пирĕн районта еплерех пурнăçланса пыраççĕ-ха? Редакци хăни - паспортпа виза службин начальникĕ В.В.СТЕПАНОВ.**

**- Владислав Витальевич, каçарăр, сирĕн уйрăма çĕнĕ çул умĕн çапла каламаллаччĕ. Анчах та илтнĕ тăрăх халĕ урăхларах.**

- Иртнĕ çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче Раççейри Миграци службин управленийĕн приказĕпе пирĕн республикăра та паспортпа виза службине урăхларах калама пуçларăмăр. Пирĕн районта вăл кăçалхи январĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа Раççейри миграци ĕçĕсене туса пыракан управленин Чăваш Республикинчи управленийĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕ пулса тăчĕ.

**- Ячĕ улшăнчĕ тейĕпĕр, апла пулсан сирĕн ĕç майĕ те улшăну тÿсет пулĕ.**

- Эпĕ ун пек каламан пулăттăм. Тĕп ĕçĕ çавăн пекех. Çул çитнисене паспорт паратпăр, улăштаратпăр, çухатнисене, юрăхсăра тухнисене çĕнететпĕр тата ытти те. Çав хушăрах халĕ куçса çÿрекенсем нумайланса кайрĕç. Иртнĕ çул, сăмахран, пирĕн района 180 çын миграци шучĕпе килнĕ.

**- Сăмах май каласан, вĕсем ăçтан, мĕнле йĕркепе килеççĕ, нумайлăха е ... саккун тăрăх вĕсен кунта мĕн чухлĕ пурăнма юрать?**

- Таджикистанран, Узбекистанран, Казахстанран килекенсем ытларах. Тăванĕсем патне килеççĕ. Хăшĕн арăмĕ кунтан, хăшĕн урăх тăванĕсем пур. Чикĕ урлă каçнă чухне миграци картипе усă кураççĕ. Виçĕ кунра, ĕç кунĕсенче, канмалли кунсемпе пиллĕк пулать ĕнтĕ, вырăна çитсе регистрацие тăмалла вĕсен. Тăхăр вунă кун пурăнма ирĕк пур. Çакăн хыççăн та юлас текенсен вăхăтлăха пурăнма ирĕк паракан документсем хатĕрлемелле.

**- Яланлăхах пурăнма юлас текенсен еплерех пулмалла?**

- Заявлени çырса документсем хатĕрлемелле. Анчах та кунта çакна палăртса хăварни вырăнлă. Кашни çула пурăнма юлма кăмăл тăвакансен хисепне республикăра палăртаççĕ. Кăçал, сăмахран 70 çын хăвармалла, республикипе. Паянхи кун тĕлне лимит тулнă ĕнтĕ. Вĕсен шутне, сăмахран, çемьере арăмĕ е упăшки Раççей гражданинĕ пулнисем кĕмеççĕ.

**- Владислав Витальевич, паспорт илмелли хаксем улшăнмарĕç-и?**

- Хальлĕхе çавăн пекех. Çĕнĕрен илме е улăштарма çĕр тенкĕ. Çухатнă пулсан 150 тенкĕ тÿлемелле. Ют çĕршыв паспорчĕшĕн - 400 тенкĕ. Паспорта вăхăтра улăштарманшăн вара пин тенкĕ ытла кăларса хума тивет.

**- Сăмах май, пирĕн районтан урăх çĕршывсене каякансем пур-и, тата ăçта ытларах каяççĕ?**

- Сахал мар. Турципе Египета каяççĕ. Канма, курма, аслă пĕлÿ паракан вĕренÿ заведенийĕнчи студентсем практикăсене çул тытаççĕ.

**- Хамăр районта çул çитменнисене паспорт парасси епле пурнăçланса пырать.**

Шкулсенче ятарлă специалистсем пур. Документсем хатĕрлесе çитереççĕ те пире пĕлтереççĕ. Вырăна тухса савăнăçлă лару-тăрура паратпăр.

**- Тавтапуç калаçушăн.**

**П.ПАВЛОВ.**

# ХĔЛ ИЛЕМĔ

Кăçалхи хĕл питĕ сивĕ килчĕ. Ăшша хăнăхнăскерсене вăл хăйĕн хаярлăхне кăтартмаллипех кăтартрĕ. Анчах çак сивĕсенчен ачасем хăрама пĕлмерĕç, ăшăрах тăхăнса вĕренме васкарĕç. Çынсем те хăйсен вăхăтне ытларах ăшă çуртсенче ирттерчĕç. Хĕл сивви лăплансан ăшă çанталăк пурне те урама йыхăрчĕ. Ачасем вара хăвăртрах çунашкисемпе тăвайкки еннелле вĕçтерчĕç. Вăшт! та вăшт! ярăнаççĕ кăна. Тем тĕрлĕ пултараканнисем пур кунта: иккĕн-виççĕн ларнисем те, çунашкисене поезд пек тунисем те, хырăмпа та, çурăмпа анаканнисем те. Пĕррехинче юри ыйтрăм: «Сивĕ мар-и вара сире?» «Çук!» - савăнăçлăн кăшкăраççĕ пурте пĕр харăс. Çăматтисемпе алсишĕсем йĕпенсе пăрланнине те пăхмаççĕ ку шăпăрлансем. Эрешлесе пĕтернĕ тăвайкки вара, чăнах та, сана та ярăнма чĕнет. Эх, хаваслă ачалăх!

Ачасене, çынсене сивĕ питех хăратмасть пулсан та кайăксене вара ку вăхăтра йывăр. Вĕçсе каякан кайăксем кăнтăр енче ĕнтĕ халĕ, анчах пурте вĕçсе каяймаççĕ-çке. Кăсăясем, уйăпсем тата ыттисем кил-çурт таврашĕнче хÿтлĕх шыраççĕ. Юлнă кайăксем хĕлле апат çитменнипе аптăраççĕ, хăшпĕрисем вилеççĕ те. Çавăнпа та çынсем кайăксене пулăшас тесе сырăшсем туса çакаççĕ.

Çăкăр тĕпренчĕкĕнчен, кĕрпепе салăран паха апат тата мĕн пултăр вĕсемшĕн! Чăн та, кайăксене юратакан кăна çакăн евĕрлĕ ырă ĕçсем тума пултарĕ.

Вăрмана кайса пăхар-ха! Унта уçăлса çÿренĕçемĕн темĕн тĕрлĕ чĕр чун йĕрри те курма пулать. Паллах, мулкач е тилĕ йĕрĕсем ытларах тĕл пулаççĕ. Халĕ мулкачсем шурă тум-тир тăхăннă та, палăрса каймаççĕ. Çапла вăрман тăрăх киленсе пыратăн. Тепĕр чух сиссе те юлаймастăн - çан умра тем мĕлт! туса илет. «Эй, кĕске хÿре! Ăçта васкатăн?!»- вĕçет шухăш. Шырать ĕнтĕ хăйне валли апат е вăйлăраххинчен тарать. Ах, мĕнле лайăх киленсе утма тавралăхпа! Чун çемçелет, савăнас килет, хĕл кунĕпе мухтанас килет!

**Роза ИВАНОВА, Мăн Марка шкулĕ.**

Трофим ИВАНОВ-ТАÇУК

## АСТУМАСТЬ

*ШÝТЛĔ КАЛАВ*

Пĕр каçхине Сăпса Мирунĕ урам урлă пурăнакан Хĕлип патне каçса ларчĕ. Чылайччен калаçрĕç кÿршĕсем. Чĕлĕм паккаççĕ те пулни-иртнине аса илеççĕ.

- Карачăм вăртах патне урăх ĕçме тесе ура та ярса пусмастăп,- терĕ Сăпса Мирунĕ ларсан-ларсан.- Курка сиктерсе куçкĕрет мăшкăл турĕ вĕт, ял кулли! Тăмла шывĕ пек сăрине хĕрхенчĕ, апăрша. Тăп-тăрă урă пуçпа, тÿп-тÿрĕ шăм-шакпа тухса утрăм килелле. «Ку - хĕрĕнкĕ-ха, пурĕ пĕрех астăвас çук»,- терĕ пуль. Нихăçан та манмастăп.

- Мана курка сиктермен, Карачăм патĕнче эсĕ манпа шултран калаçса кайрăн, çав пăшăрхантарать,- терĕ Хĕлип маччана пăхса,- пÿрт тулли халăх умĕнче темĕн те пĕр каласа хăртрăн. Питĕ аванмарлантăм. Чавсаланнă Сăпса тÿрленсе ларчĕ.

- Суян пуль, Хĕлип, эпĕ астумастăп-çке. Тупата-туршăн нимĕн те астумастăп!

Калакан манать, илтекен астăвать,- тавăрчĕ Хĕлип.- Çемене пĕр майлă пулнă та эс, çăвара кĕрсе каяс пек кăшкăратăн. Çеменĕ вара: «Эсĕ ман пăрăва колхоз йĕтемĕ çинчен тытса кĕрсе штрафлаттартăн, упăте!» - тесе çухăрать. Эс ун майлă.

- Ним те астумастăп,- хăйĕннех перет Сăпса,- çапса пăрахсан та астумастăп.

- Çемен хĕрсе кайрĕ те çапма тесе аллине çĕклерĕ,- йĕркипе каласа парать Хĕлип.

- Нимĕн те астумастăп, пачах астумастăп,- мăкăртатать Мирун,- карланкăна ытларах янă çав, ÿсĕр пулнă.

- Аллине çĕкленĕччĕ те, эсĕ тытса чартăн. Вара лешĕ лаках каялла кайса ларчĕ.

- Вăт кăна астăватăп,- Хĕлип çумнерех кăшăрт сикрĕ Мирун.- Чăнах та, Çемен сана çапма тăчĕ. Хам аран тытса чартăм. Уншăн ăна эпĕ хăйне хăлха чикки тăхăнтартса ярасшăнччĕ те...

- Тăхăнтартса ярасшăн пултăн çав,- каллех пÿлĕ Мируна Хĕлип.- Тилĕрсе кайнă Çемене: «Эсĕ çапни - ÿпре çыртнă чухлĕ те пулас çук, çапас-тăк - лаша тапнă пек лектермелле!»- терĕн те тăнлавран тĕллесех сулса ятăн. Аран-аран пăрăнма ĕлкĕртĕм.

Сăпса Мирунĕ ура çине тăчĕ. Унтан «нимĕн те астумастăп, нимĕн те астумастăп» текелерĕ те çĕлĕкне тăхăнса алăк патнелле утрĕ.

## ЮРАТАКАНСЕН КУНĔ

Февралĕн 14-мĕшĕнче Янăшри культура çуртĕнче Юратакансен кунне халалласа «Светуй Валентин» уявне ирттерчĕç. Мероприятие килнĕ хăнасем Валентинсем пулчĕç. Людмила Ивановна пĕрпĕрне кăмăллакансем валли конкурссем ирттерчĕ, юрату çинчен ыйтусем пачĕ. Альбина Александрова пухăннисене юрă-ташăпа савăнтарчĕ. Чи вăйлисем, хăюллисем çаксем пулчĕç: Валентина Геннадьевна, Валентина Романовна, Валентина Витальевна.

Юлашкинчен Светлана Геннадьевна пурне те телей, ырлăх-сывлăх, юрату сунчĕ, Валентинăсене парнесем пачĕ.

Уяв чей ĕçнипе вĕçленчĕ.

**С.ГЕННАДЬЕВА.**

❂ Шашка-шахмат

**Иртнĕ канмалли кунсенче вырăнти «Урожай» спорт обществи республикăра халиччен пулман ăмăрту ирттерчĕ. Мероприяти районти пĕрремĕш СССР спорт мастерĕ, Раççейри тата республикăри нумай ăмăртусенче çĕнтернĕ тата малти вырăнсене тухнă М.Ефимов парнисемшĕн пулчĕ.**

Шашка, шахмăт вăййине юратакансем икĕ майпа вăй виçрĕç. Хутшăнас текенсем нумай пулнăран вăйăсем малтан виçĕ çурма финалти уйрăмсенче иртрĕç. Çапла вара финала пилĕк шашистпа пĕр шахматист тухрĕç. Виççĕшĕ шашкăлла выляссипе СССР спорт мастерĕсем: Н.Дмитриев (Вăрмар), В. Наумов (Вăрнар), М.Ефимов (Кÿкеç), иккĕшĕ спорт мастерĕн кандидачĕсем: Н. Федотов (Патăрьел), О. Вакин (Вăрмар) тата пирĕн район шахмат вăййин чемпионĕ А.Александров (Ишлей). Çĕнтерÿçĕ ята пысăк опытлă Николай Дмитриев тивĕçрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене В.Наумовпа М.Ефимов пайларĕç.

Уйрăммăн шахматпа пĕрремĕш вырăнта В.Наумов, шашкăпа М.Ефимов пулчĕç.

Ăмăртусене ирттерме парнесемпе укçа-тенкĕ парса «Нектар» производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Н.Столяров пулăшрĕ.

**М.АЛЕКСАНДРОВ.**

❂ Çар

# ПУРНĂÇЛАННĂ ĔМĔТ

**Пурнăç вăл - питĕ кăсăк япала. Паян, ыран мĕн пулассине пĕлейместĕн. Пĕр вырăнта тăмасть вăл, кашни кун улшăнса пырать. Çакна лайăх пĕлсе çитме те нумай вăхăт кирлĕ. Акă, юнашарах пурăнакан В.М.Гаврилова та лайăх пĕлнĕн туйăнатчĕ. Хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа парсан вара эпĕ хама валли нумай çĕнни уçрăм.**

Валерий Михайлович 1947 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче Мăн Марка ялĕнче çуралнă. Кунтах шкулта вĕреннĕ, 8 класс пĕтернĕ. Кайран Ишекри вăтам шкулта ăс пухнă. Вĕренсе тухсан Шупашкарти кабель заводне ĕçлеме вырнаçнă. Вăхăчĕ, паллах, йывăр пулнă: вăрçă хыççăн апат-çимĕçĕ те, укçитенки те çитмен. Мĕн пĕчĕкренех вăл десантник пулма ĕмĕтленнĕ. Шупашкарта аэроклуба çÿреме тытăннă. Парашюта пуçтарса çыхма ăна тĕнче чемпионки Мая Костина вĕрентнĕ.

1966 çулта 19 çулхи çамрăка салтака илсе кайнă. Тинех Валерий Михайловичăн ĕмĕчĕ пурнăçланнă, вăл - десантник! Вĕсене, 100 çынна, Литвана илсе каяççĕ. Хĕсметре тăнă вăхăтра ăна Чехословакине Пражский Града хÿтĕлеме янă. Унта хăйĕн ăсталăхне кăтартнăшăн, лартнă тĕллеве пурнăçланăшăн Валерий Михайловича Совет Союзĕн Маршалĕ А.Гречко тав хучĕпе хавхалантарнă. Чăваш каччи тĕрлĕ çĕрте пулса курнă: Германире, Польшăра, Венгрире, Сирипе Латви çĕрĕсенче. Икĕ çул иртсен те Валерий Михайлович салтакран юлнă, тепĕр 8 уйăх ăна çамрăксене вĕрентме хăварнă. Вăл тăван кĕтесе 1969 çулта таврăннă. Валерий Михайлович парашютпа пурĕ 28 хутчен сикнĕ. «Эпĕ салтака кайни 40 çул çитет ак. Вăхăт хăварт иртет, пирĕн пурнăç та çавăн пекех, шăвать. Эпир салтакра пулнă чух никам та службăран тарма шутламан, хаваспах çĕршыва хÿтĕленĕ, халĕ вара...»- чун ыратăвне палăртать Валерий Михайлович.

Ыран ак - Çĕршыв хÿтĕлевçисен кунĕ çитет. Валерий Михайловича саламланă май çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп.

**Ксения НЕСТЕРОВА, Мăн Марка ялĕ.**

❂ 01 асăрхаттарать

## ЭРЕХ, ПИРУС, ВЫРĂН - ИНКЕК

Пирĕн пурнăçра халĕ час-часах пулакан тĕслĕх çакă. Эрех ĕçнĕ, пирус чĕртнĕ, çывăрса кайнă. Малалли каламасăрах паллă. Пÿрт-çурт çунса кĕлленет, айăпли е çунса каять, е пиççе сусăрланать.

Оппукассинче пурăннă, 1922 çулта çуралнă В.Кузнецовăна иртнĕ çул шалкăм çапсан унăн 36 çулхи ывăлĕ Ю.Кузнецов ĕçе хăварсах амăшне пăхма яла килет. Пускилсем калана тăрăх, вăл юратнă амăшне питĕ лайăх пăхнă.

Кăçалхи февралĕн 10-мĕшĕнче вĕсем патне Çĕнĕ Шупашкарти газ служби ĕçченĕсем пÿрте ăшăтмалли системăна тĕп трассăпа çыхăнтарма пыраççĕ. Ĕç хыççăн кил хуçи, унăн пускилĕ тата ĕçлеме килнĕ икĕ çын литр эрех ĕçеççĕ. Хăнасем кайса пĕтсен Ю.Кузнецов пирус чĕртет те телевизор ярса курма ларать. Кĕçех çывăрса та каять вăл.

Тепĕр пÿлĕмре выртнă амăшĕ тĕтĕм шăршине сиссе тăрса ывăлĕн пÿлĕмне кĕрет. Çывăракан ывăлĕн çи-пуçĕ çуннă. Ватă амăшĕ ăна шыв сапса сÿнтерет, анчах та ывăлне тăратаймасть. Пускилсене чĕнме тесе тула тухсан пусма вĕçĕнче ÿксе тăнне çухатать. Ывăлĕ вăранса тухнă çĕре вăл шăнса та хытнă ĕнтĕ. Ю.Кузнецовăн кĕлетки вара вăтăр процент таран пиççе кайнă.

**В.МАТВЕЕВ, районти пушар надзорĕн дознавателĕ.**

❂ Криминал

## АСТАРАКАН «ТЕТТЕСЕМ»

**Çут çанталăк саккунĕ çавăн пек-ши? Пурнăçра япăххипе лайăххи яланах юнашар пыраççĕ. Ĕтемлĕх пурнăçа çăмăллатас тĕллевпе тĕрлĕ çĕнĕлĕхсем шыраса тупать. Çав вăхăтрах вăл тÿнтерле енсем те кăларса тăратать. Паян эсĕ çул-йĕрте пынă çĕртех кĕсйерен пĕчĕк çеç чăмăркка, асамлă тимĕр татăкки, кăларатăн та кирлĕ çĕре шăнкăравласа, кирлĕ çынпа калаçма пултаратăн. Шăпах çак «тетте» ырă мар шухăшлă çынсен астараçи пулса тăчĕ те халĕ.**

Пĕрисене вăл ĕçпе е урăх сăлтавпа чăннипех те питĕ кирлĕ. Кÿкеçри инвалидсемпе ваттисен çуртĕнче пурăнакан пĕрремĕш ушкăнри инвалид Сергей Семенов та ăна илме ĕмĕтленсе уйăхсерен укçа пухса пынă. Çитмен укçине ăна юлташĕсем кивçенле парса пулăшнă. Сергее вăл мухтанса çÿреме мар, аякри тăванĕсемпе, паллакан-ĕсемпе калаçма (час-часах курайместăн вĕт) кирлĕ пулнă. Ырă кăмăллă çын унпа хăй çеç усă курман, кунта пĕрле пурăнакансене те калаçтарнă. Февралĕн 12-мĕшĕнче вĕсем, кăнтăрла иртсен тепĕр инвалидпа, Сергей Колядинпа, магазинтан хăйсен çуртне таврăннă.

- Çирĕм çулсенчи виçĕ çамрăк, лайăх тăхăннăскерсем, пире хирĕç пулчĕç те питĕ васкавлăн таçта шăнкăравламалли çинчен каласа мобильнăй телефон пурри çинчен ыйтрĕç. Эпĕ ним шутласа тăмасăрах кăларса патăм. Телефон алла лексенех пĕри пĕр еннелле, иккĕшĕ вăрманалла тапса сикрĕç,- каласа парать Сергей.

Çак ачасене мĕнле ашшĕ-амăшĕ çуратнă-ши? Ачаран сусăр çуралнă, аран-аран утакан инвалид ăна ырă тăвас, пулăшас тĕллевпе ултă пин ытла тăракан телефона кăларса парать. Чунсăр çамрăк вара унран мăшкăлласа кулать. Çакăн пек чунсăр çынсем хăйсен пурнăçĕнче телейлĕ пуласси иккĕленÿллĕ.

Юлашки вăхăтра çак «теттене» хапсăнакансен йышĕ хушăнсах пырать. Ĕçре те, шкулсенче те, уйрăмах обществăлла вырăнсенче. Çак кунсенче кăна пирĕн районта унран ирĕксĕр хăтарнă темиçе тĕслĕх пулнă. Ишлейре пурăнакан çирĕм икĕ çулхи каччă хăйĕнчен çичĕ çул аслăрах хĕрарăмăн телефонне кăларса илнĕ. Ун пек тĕслĕхсем тата Кÿкеç поселокĕнче кăнтăрлах, Шăнкасра, Тимĕрçырмара пулнă.

**П.ЧАШМА.**



**Сип-симĕс тумлă чăрăшсем лараççĕ**
**Шап-шур пĕркенчĕк айĕнче мăнаçлăн.**
**Çурхи кунсем çывхарнине туяççĕ,**
**Сывлаççĕ халь вĕсем хавассăн.**


## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРÜСЕМ

☎ 2-13-80

*Дорогие жители поселка Кугеси и Чебоксарского района!*

***Примите самые сердечные поздравления с Днем защитника Отечества!***

***В этот праздничный день всем, кто честно исполнял свой долг перед Отчизной, желаю оптимизма, счастья, уверенности в завтрашнем дне, крепкого здоровья и мирной жизни.***

**С уважением генеральный директор ОАО ПФ «Чебоксаркаропромтехсервис», депутат Государственного Совета Чувашской Республики *А.В.БОРОДАВИН.***

**Администрация Чебоксарского района** *объявляет* конкурс на замещение вакантной муниципальной должности муниципальной службы – главный специалист управления экономики, имущественных и земельных отношений администрации Чебоксарского района.

Для участия в конкурсе необходимо представить в управление делами, организационно – контрольной и кадровой работы администрации Чебоксарского района следующие документы:

- заявление;
- личное дело, листок по учету кадров;
- фотографию;
- документ, удостоверяющий личность (по прибытии на конкурс);
- документы, подтверждающие необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию (выписку из трудовой книжки, копии документов об образовании, повышении квалификации, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы);
- медицинскую справку.

Заявление на участие в конкурсе принимаются ежедневно с 8[00] до 17[00] часов кроме субботы и воскресенья до 07 марта 2006 года в кабинете №№ 6,7 администрации Чебоксарского района.

***Справки по телефону: 2-10-47, 2-16-91.***

**Кугесьский почтамт** с 21 февраля 2006 г. работает без обеденного перерыва с 8 до 17 часов.

❂ ❂ ❂

ОАО ПФ «Чебоксаркагропромтехсервис» выражает искреннее соболезнование водителю Григорьеву Геннадию Александровичу в связи с безвременной кончиной **ЖЕНЫ.**


**Хаçатăн çитес номерĕ февралĕн 28-мĕшĕнче тухать.**


Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

ТĂВАН ЕН («КРАЙ РОДНОЙ») Чебоксарская районная газета

Учредители: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, РГУ «Редакция Чебоксарской районной газеты "Тăван Ен"»,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, зам.гл. редактора - 2-12-59, отдел сельского хозяйства, отдел писем, отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП "ИПК Чувашия". Тел.21-00-23.

Дежурный по номеру: А.И.ИЗМАН.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 21.02.2006 г. в 16 час. 00 мин. Тираж 1810. Заказ № . Индекс газеты - 54820.